# Митта еткерлĕхĕ

Митта Ваçлейĕн иксĕлми поэзийĕ паянхи чылай поэта хавхалану парса тăракан чĕрĕ çăлкуçĕ пулса тăрать тесен, пĕрре те йăнăш пулмĕ. Тин кăна папкаланма пуçланă çамрăк сăвăçсем те, ят-сумлисем те çак тĕлĕнмелле чăваш поэчĕн тан тапса тăракан пултарулăхне чун-чĕре куçĕпе тĕпчесе тухса, сăмах хакне тивĕçлипе туйса илме вĕренеççĕ. Сталин культне пула çамрăклах лагерьсен хĕн-хурлă тамăкĕнчен çунса тухнă пултаруллă поэт хăй пĕрине чĕре хăйрипе çивĕчлетнĕ. Çынлăха çухатмасăр, çĕнĕ произведенисем çырса, вулакансене тĕлĕнтернĕ.

Çунатăм, юлатăн. Ан макăр,
Салтак пек матур уйрăлар.
Ман çул — çăлтăр витĕр — тап-такăр,
Ман çул — куççуль витĕр — уяр.

**«ПУÇ ЯНИСЕН ЮРРИ».**

Чун-чĕре кăварĕпе шăранса тухнă йĕркесенче поэт тĕрĕслĕх кунĕсем çитессе çирĕп шанса тăрать, тăван çĕршывăн ăшă та сиплĕ хĕвелне тепĕр хут курасса ĕненет.

## *Поэт—поэт çинчен*

Кăçал «Тăван Атăлăн» 4-мĕш номерĕнче Николай Исмуков поэт Митта Ваçлейĕн трагедиллĕ кунçулĕ çинчен «Митта» поэма пичетлесе кăларса, вулакансене мал ĕмĕтлĕ ăсталăхĕпе савăнтарчĕ.

Николай Исмуков — чăваш çырулăхне çĕнĕ сасăпа тухнă поэт. Унăн поэтики нумай енлĕ те ытарлă. «Митта» поэмăн форми те хăйевĕрлĕ, шухăш-кăмăлĕ те сулмаклă, аслă. Кун çинчен ăшă кăмăлпа палăртса хăвармасăр май килмест. Поэт классикăллă виçепе çырать. Унăн пултарулăхĕ хăйĕн шухăш сăнарлăхĕпе, витĕмлĕхĕпе палăрса тăрать.

«Митта» поэма чăваш сăвăçин кунçулне çутатса паракан вăхăтăн тĕрлĕ фрагменчĕсемпе никĕсленнĕ. Малтанхи фрагменчĕ — «Çулсем».

Сухала ÿстерем — ан паллатăр çич ют,
Тăшманран ĕмĕте пытарам.
Мĕн амакĕ? Каллех шиклĕрех катаран
Ман пата ыткăнать юланут...

Сикчевлĕ вăхăт юланучĕ çĕнĕ самана сăвăçи патне çывхарать. Унăн чуппинче çÿçентерекен паллăмарлăх тата хăрушлăх: аякра Çĕпĕр — 1949 çул, 1950 çул, 1955 çул — Таловка...

Саккăрла явăнса çил тăллать урана,
Е татах тамăка тавăрасшăн мана?..
Ирĕк сывлăшĕпе чунăма эп çăвам,
Тăван кил тунсăхне куççульпе эп çăтам.

Сикчевлĕ вăхăт драматизмне кăтартса пама Николай Исмуков поэт «Кăмăлăм» тата «Шухăшăм» монологсенче хăйне евĕр асамлă уçă тупнă.

Саманана, пуçа пушмак килсессĕн,
Ирĕксĕрех иккĕленсе виçен:
Мĕне пĕлтерĕн, тĕрĕслĕхĕм, эсĕ? —
Эп тĕрĕсмарлăх аллинче вилсен,
Эй, вăтăрмăш çулсем, йÿп-йÿçĕ эрĕм
Тути-маси килет чĕлхем çине.
Тавах, Çĕршывăм, — эсĕ ĕненмерĕн
Эп тăшману пулма пултарнине.

**«КĂМĂЛĂМ» МОНОЛОГРАН.**

Поэмăри лирикăллă- философиллĕ ярăмсем хăйсен шухăш-кăмăл çĕнĕлĕхĕпе асра юлаççĕ. Поэмăн çĕнĕлле конструкцийĕ, шухăш-кăмăлăн хăйевĕрлĕхĕ, сăнарлă чĕлхи авторăн пысăк ÿсĕмĕ çинчен евитлеççĕ. «Шухăшăм» монолог Омар Хаямăн рубаисене çывăх тăнине те палăртса хăварас килет. Хĕвелтухăç поэзийĕн классикăлла виçипе поэт выранлă усă курнă кунта.

17. Ан уттăр терĕн пулĕ урăхран, —
«Ятарласа тĕллерĕн ураран».
Тем вăрăмăш патак та икĕ вĕçлĕ:
Паян йĕретĕп эпĕ, эс — ыран.

18. Шухăшласа калатпăр тĕсесе:
Элекĕн аллисем кĕске тесе.
Пĕлместĕр-им? — Ун урисем пит вăрăм,
Çитсе çавăрăнать пур кĕтесе.

34. Усал сăмах кĕрет сăмах шутне,
Хăрушă кун кĕрет вăхăт шутне.
Сана та пурнăç темелле-ши, хуйхă? —
Кĕретĕн эс те пурăнни шутне.

Кунашкал строфасем «Шухăшăм» монологра пайтах. Вĕсем Митта Ваçлейĕн инкек-синкеклĕ йывăр çулĕсенчи психологине анлăн та витĕмлĕн уçса парса, унăн тавракурăмĕн сарлака инçетне курма пулăшаççĕ. «Митта» поэма, ман шутпа, — паянхи кунсен утăмĕпе çуралнă ăнăçлă произведенисенчен пĕри. Николай Исмуков хайлакан поэмăсемпе сăвăсем чĕлхе тирпейлĕхĕпе, витĕмлĕхĕпе тата шухăш сăнарлăхĕпе уйрăлса тăраççĕ.

Атте-аннесен сăввисен-юррисен
Кулянчăк вĕçне тухас марччĕ.
Ахаль-им тин çеç шур хур тĕкĕ çине
Саркайăк вĕçсе килсе ларчĕ, —

тесе çырать «Улăп» поэминче чĕлхе асамлăхне çивĕч чунпа туйса илсе поэт. Ку йĕркесем ăнсăртран çуралман. Вĕсен пĕлтерĕшĕ поэтăн пултарулăхне ăнлантарса паракан эпиграф пек туйăнать. Ара, ку шухăш чăнлăхне Николай Исмуков поэтăн чылай сăвă ярăмĕ уçса парать. Пĕлтĕр «Ялав» журналта (№ 12) пичетленнĕ «Ĕненĕве ялав пек çĕклесе» ятлă сăвă ярăмĕнче те автор поэзи хĕлĕхĕсене чăн-чăн ăсталăхпа ĕнĕрме пултарнине асăнса хăварас килет.

...Çул вĕçĕнче хама хам суям мар:
Пур-и е çук-и çав турă, —
Пурпĕр, туссем, телей мар, телей мар —
Хуйхă манран сăвăç турĕ.
Пурпĕр, туссем, пуçра сывлăх пур чух
Çав хуйăха тав тăвас кăмăл çук.

Пĕр-пĕр вулакан çак йĕркесенче эрленчĕк кăмăл-туйăм витĕмĕ пур тесе ĕнентерме хăтланĕ. Анчах сăввăн юлашки икĕ йĕркинче поэтăн оптимизмĕ куçкĕретех курăнса тăрать. Ăсталăх вăрттăнлăхĕ те çакнашкал йĕркесенче пытанса тăмасть-и вара? Кунта комментари кирлĕ мар. Николай Исмуков, тăван поэзи пахчине шанчăклă утăмсемпе утса кĕрекен пахчаçă пек, илемлĕ произведенисен чăн-чăн культурине лайăх ăнланать. Çамрăк çыравçăсем час-часах поэзири искусственнăй чечексемпе чăн-чăн чечексене уйăраймаççĕ. Вĕсене ятлă поэтсен сăввисемпе поэмисене чун-чĕре куçĕпе тишкерсе тухма сĕнес килет. Николай Исмуков пултарулăхĕнче кăмăла илĕртекен чĕрĕ чечексем хунаса ларни чăн-чăн сăвăнăç кÿни çинчен ытлашши сăмах ваклама та кирлĕ мар. Çакна поэтăн кăçалхи «Тăван Атăл» журналăн 4-мĕш номерĕнче пичетленсе тухнă «Митта» поэми хăйĕн шухăш-кăмăл чăнлăхĕн экспрессилĕхĕпе асра юлакан произведенисен шутне кĕнине пĕр иккĕленмесĕр палăртса хăвармалла:

Эй, хирĕçлев саккунĕ, кассăн-кассăн
Ÿстерекен вăрттăнлăху ăçта?
Хăрушă элеке чăтса курсассăн
Пулан иккен ăсчах та, сăвăç та.

Çак йĕркесенче «Митта» поэмăн тĕп шăнăрĕ. Апла пулсан, тан тапса тăракан пултарулăх çăлкуçĕ мал ĕмĕтлĕ поэта çĕнĕ произведенисем çырма хавхалантарса тăтăр. «Шур хур тĕкĕ çине вĕçсе килсе ларнă саркайăк» татах та çĕнĕ кĕвĕсем шăрантарса, вулакансен асне ĕмĕрлĕхех тăрса юласса шанатпăр.

Николай ТЕВЕТКЕЛ.